Иванов К.В. Килчĕ ырă çуркунне : [сăвă] / К.В. Иванов // Тăван сăмах : 3 кл. / А.С. Отачкинпа М.Р. Романов хатĕрленĕ. – Шупашкар, 1957. – С. 86.

# Килчĕ ырă çуркунне.

*К. Иванов.*

Килчĕ ырă çуркунне,
Килчĕ, ячĕ ăшăтса.
Хĕвел савать тĕнчене,
Хĕл ыйхинчен вăратса.

Тĕттĕм вăрман чĕрĕлет,
Ешĕл тумтир тăхăнать,
Çеçенхир те ешерет,
Илемĕпе мухтанать.

Тĕрлĕ-тĕрлĕ чечексен
Ырă шăрши сарăлать;
Пур çĕрте те кайăксен
Лайăх юрри янăрать.

Çӳлте, пĕлĕт айĕнче,
Тăри юрри илтĕнет.
Çемçе курăк çийĕнче
Путек-сурăх сиккелет.